# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

103 (7743) № ✻ Юн кун, 2009 çулхи декабрĕн (раштав) 23-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


**Ĕçре пултаруллисем**



## Çыхăну ĕçĕнче чылайранпа

***Сăн ӳкерчĕкре эсир «ВолгаТелеком» уçă акционер обществин Чăваш Республикинчи филиалĕн Муркашри сервис службин ĕçченĕсене куратăр. Эльвира Юрьевна Григорьева çыхăну ĕçĕнче 19 çул, Алевтина Вениаминовна Овчинникова 35 çул, Лариса Геннадьевна Анисимова 15 çул вăй хураççĕ. Хăйсен ĕçне аван пĕлекен специалистсем вĕсем. Опычĕсемпе вара ыттисене те паллаштарма ӳркенсе тăмаççĕ.***

**В. ШАПОШНИКОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

**ЧР Президенчĕн Çырăвĕ**

## Умра – пĕлтерĕшлĕ пысăк задачăсем

***Хаçат вулакансене Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров республика Патшалăх Канашне янă çыру пирки хăйсен шухăшĕсене пĕлтерме ыйтнăччĕ. Хаçатăн паянхи номерĕнче калаçăва малалла тăсатпăр.***

**Владислав Кириллович АНАНЬЕВ, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи:**

– Президент Çырăвĕ чăннипех те анлă калăпăшлă документ пулса тăрать. Унта вăл иртнине хак панипе пĕрлех малашлăхра экономикăна палăрăмлă çĕнĕ шая çĕклесси пирки те, халиччен усă курман çĕнĕ технологисене пурнăçа кĕртесси пирки те, наукăпа техника прогресĕпе вĕрентӳ ĕçĕ-хĕлĕ пирки те, информаци технологийĕ тата ытти пирки те тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Кунпа пĕрлех вара ял хуçалăхĕ умне лартакан задачăсем те питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Президент тĕрĕсех палăртать. Чăваш Ен ял хуçалăх регионĕ пулса тăрать. Республикăра ытларах ял хуçалăх продукцине туса илеççĕ. Апла пулсан экономикăна хăвăрт аталантарас, ăна çĕнĕ шая çĕклес тесен, ял хуçалăхĕ çине пысăк тимлĕх уйăрмасăр май çук. Ял хуçалăх продукцийĕ туса илессине тĕпрен ӳстерни кирлĕ.

«Чи çывăх тĕллев – çулталăкне 1 миллион тонна тырă тата 1 миллион тонна тымар çимĕç туса илесси. Çак хисеп вĕсене туса илессин калăпăшне икĕ хут пысăклатнине эсир пĕлетĕр. Эпир çакна тăватпăрах. Кам ĕненмест, çав ирĕклĕ»,– палăртрĕ Президент.

Çапла, ума лартнă тĕллев-задачăсем пĕчĕк мар. Анчах та вĕсене пурнăçласах пулать. Унсăрăн май çук. Кăçал районĕпе 34,9 пин тонна тырă, 57,9 пин тонна çĕр улми туса илнĕ. Ку кăтартусем унччченхи çулхинчен пысăкрах. Апла пулин те вĕсене туса илессине татах ӳстерме конкретлă мерăсем палăртса вĕсене пурнăça кĕртес пулать.

Акă халĕ районĕпе усă курман çĕрсем 2000 гектар ытла. Вĕсене пусă çаврăнăшне кĕртни – ку енĕпе пысăк резерв. Кун пек çĕрсем уйрămах Ильинка, Шетмĕпуç, Ярапайкасси ял тăрăхĕсен территорийĕсенче сахалах мар. Унпа пĕрлех вара ял хуçалăх культурисен тухăçне ӳстересси, çĕрсемпе эффективлă усă курасси пирки те манма кирлĕ мар.

Çавна та палăртнă пулăттăм. Чăвашсем пĕччен хулă хуçăлать тесе ахаль каламан пулĕ. Иртнĕ вăхăтра хăш-пĕр пысăк хуçалăхсем пайланасвакланас çул çине тăчĕç. Практика вара халĕ урăххине çирĕплетсе парать. Пĕчĕк хуçалăхсем хальхи хаклă тăракан çĕнĕ техникăна та туянма пултараймаççĕ, кредитсем илме те майсем сахалрах.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

**Район администрацийĕнче**

## Çивĕч ыйтусене тишкерчĕç

Тунти кун, йăлана кĕнĕ тăрăх, район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсемпе планерка ирттерчĕ. Чи малтанах вăл Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров Чăваш Республикин Патшалăх Канашне тата республикăра пурăнакансем панте янă Çыру çинче чарăнчĕ.

– Сирĕнтен кашнин ăна тĕплĕн тишкермелле, çак Çыру тăрăх хăвăр ĕçре мĕн тумаллине палăртмалла, пурнăçламалла, – терĕ Юрий Александрович.

Юлашки кунсем питĕ сивĕ тăчĕç. Апла пулин те район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕ В.Г. Никитин планеркăра палăртнă тăрăх, коммуналлă сфера объекчĕсем йĕркеллех ĕçленĕ. Оринин тата Ярапайкасси ял тăрăхĕсенче çутă сӳнсе ларнă тĕслĕхпе те çитменлĕхе çийĕнчех пĕтернĕ. Вăйлă сивĕсене пула вара çӳп-çап тăкмалли полигонра ĕçсене требованисемпе килĕшӳллĕн (мĕншĕн тесен 20 градусран ытла сивĕ пулсан ĕçсене ирттермелле мар) вăхăтлăха чарма тивнĕ. Çавăн пекех Владимир Германович иртнĕ эрнере Патаккасси çулне тăвас тĕлĕшпе аукцион иртни çинчен пĕлтерчĕ, хуçалăхсем хушшинчи «Аликово» строительство организацийĕ çĕнтернĕ аукционра.

Вăйлă сивĕсем обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарас ĕçре те сиен кӳреймерĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В.К. Ананьев çакна палăртрĕ: куллен паянхи куна кашни ĕнерен иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 1,3 кг ытларах сĕт сăваççĕ. Апла пулин те хăш-пĕр хуçалăхсенче сăвăм иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен чакнă. Хĕллехи тапхăр мĕнле иртнине тишкерес тĕллевпе вара юн кун районта выльăх-чĕрлĕх пăхакансен кунĕ иртет. Декабрĕн 24-мĕшĕнче ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисен, зоотехниксен, ветеринари ĕçченĕсен канашлăвĕ пулать. Унта кăçалхи ĕçе пĕтĕмлетеççĕ.

Сивĕ кунсенче районта 2 çын шăнса вилнĕ. Кун çинчен районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов пĕлтерчĕ. Çак тĕслĕхсем пире асăрханулла пулмалли çинчен калаççĕ.

Ларура электронлă документ çаврăнăшне йĕркелесси çинчен те тĕплĕ калаçу пулчĕ. Район администрацийĕн ĕçĕсене йĕркелесе пыракан А.В. Краснов ку ĕç район администрацийĕнче кăçал вĕçленмеллине пĕлтерчĕ. Ял халăхне вырăнтан тухмасăрах хăйсене кирлĕ информацие, документсене илме вĕрентессипе вара ялсенчи библиотекăсене тата вĕрентӳ учрежденийĕсене явăçтарассине палăртрĕ.

Районта пурăнакансем «Ачалăхшăн, ачалăх ячĕпе» ыр кăмăллăх марафонне хутшăнма пуçларĕç ĕнтĕ. Районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Н.П. Петрова планеркăра ку ĕç мĕнле пынипе тĕплĕн паллаштарчĕ.

2009 çул вĕçленсе пырать. Çавăнпа та планеркăра бюджет мĕнле пурнăçланнине те тишкерчĕç. Декабрĕн 25-мĕшĕнче Муркашри Культура çуртĕнче çамрăксен çулталăкне хавасл ларутăрура хупаççĕ. Юн кун вара депутатсен районти Пухăвĕн черетсĕр ларăвĕ пулать. Çак ыйтусене тишкернипе пĕрлех Çĕнĕ çул уявне хатĕрленсе ирттересси çинчен те тĕплĕ калаçу пулчĕ. Район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов районти предприятисемпе организацисен, учрежденисен умĕсене капăрлатасси çине тимлĕрех пăхмаллине палăртрĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ-культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи А.Е. Андреева уяв кунĕсенче ирттермелли мероприятисен планĕпе паллаштарчĕ.

Планеркăра çавăн пекех 2010 çулхи 1-мĕш çур çул валли хаçат-журнал çырăнтарас ыйтăва та тишкерчĕç. Асилтерни вырăнлă пулĕ, декабрĕн 25-мĕшĕнче подписка кампанийĕ вĕçленет. Çавăнпа та районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата, çавăн пекех республикăра тухса тăракан изданисене çырăнмасăр ан юлăр.

**Л.ПАВЛОВА.**

**Районта**

## Çамрăксене – тивĕçлĕ çурт-йĕр

Çурт-йĕр çавăрасси – кашниншĕнех пĕлтерĕшлĕ ыйтусенчен пĕри. Çавăнпа та Республика Президенчĕ çак ыйту ĕç тăвакан влаç органĕсен, вырăнти администрацисен тата предприятисен тĕп задачи пулмаллине калать.

Пирĕн районта паянхи кун, республикăри пекех, «2012 çулччен яла социаллă аталантарасси» федераллă тĕллевлĕ программа аван пурнăçа кĕрсе пырать. Яллă вырăнсенче пурăнакан çамрăк çемьесемпе çамрăк специалистсем (35 çулччен) çак программăпа усă кураççĕ.

Декабрĕн 18-мĕшĕ тĕлне ялта çурт-йĕр çавăрма 12 çамрăк специалист социаллă тӳлеве тивĕçрĕç. Вĕсене куçарса панă укçа пĕтĕмĕшле 6705015 тенкĕпе танлашать. Вăл шутран федераллă бюджетран – 2873595 тенкĕ, республика бюджетĕнчен – 957825 тенкĕ, вырăнти бюджетран 2873595 тенкĕ уйăрнă.

Кăçалхи çул ялта пурăнакан 5 гражданин çак тĕллевпех пĕтĕмĕшле 2304910 тенкĕне тивĕçрĕç. Федераллă бюджетран – 1536649 тенкĕ, республика бюджетĕнчен – 256090 тенкĕ, вырăнти бюджетран 512180 тенкĕ куçарса панă.

Туса пĕтернĕ тата туяннă пурăнмалли çурт-йĕрĕн пĕтĕмĕшле калăпăшĕ 768,19 тăваткал метр чухлĕ.

**Çырав – 2010**

## Çырав çывхарать, ĕççсем ытларах

Тунти кун Пĕтĕм Раççейри халăх çыравне хатĕрленсе ирттерессипе ĕçлекен районти комисси ларăвĕ пулчĕ. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ертсе пычĕ.

Комисси членĕсем 3 ыйтăва пăхса тухрĕç. Пĕтĕм Раççейри халăх çыравне хатĕрленсе ирттерессипе ĕçлекен районти комиссин 2010 çулхи ĕç планне çирĕплетрĕç. Çырава хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе халăх хушшинче туса пыракан ăнлантару ĕçне хакларĕç. Çавăн пекех çитес çул валли йĕркелӳ ĕçĕсен планне йышăнчĕç.

Çырав çитес çулхи октябрь уйăхĕнче иртмелле. Вăл çывхарнă май тумалли ĕççен калăпăшĕ те ӳсет.

**Хамăр инф.**

**Кĕскен**

## «Чăваш Ен наци радио» тулли праваллă

Федерацин Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферин надзор службинчен ырă хыпар çитрĕ: Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Чăваш наци радио» автономи учрежденийĕ эфира тухма лицензи илнĕ. Ĕçтешсен çитес çулхи тепĕр тĕллевĕ – Чăваш Республикин тĕп хули валли эфирăн уйрăм частотипе кăларăмсем хатĕрлесси.

**Юбилей**

## Саламлатпăр

Муркашра пурăнакан **Валентина Ивановна ВАЛЕЖНИКОВАНА** сумлă юбилейпе саламлатпăр! Нумай çул пĕрле ĕçленĕрен сана, ĕçчен те пултаруллă хĕрарăма, ырă кăмăл, çирĕп сывлăх, çемьере килĕшӳпе тăнăçлăх сунатпăр. Ачасемпе мăнуксем тата юратнă мăшăр сана савăнăç çеç кӳччĕр. Ĕмĕрĕр чăваш сурпанĕ пек вăрăм пултăр.

**Райхаçат редакцийĕнче ĕçлекенсем.**



Çĕньял Хуракасси ялĕнче пурăнакан **Александра Федоровна АНИСИМОВА** çак кунсенче 70 çул тултарчĕ.

Пирĕн хаклă та юратнă çыннăмăра юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Салампа пĕрлех мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсем пурнăçа кĕрсех пыччăр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, кĕрекӳ тăвансемпе пуян пултăр, ачусен, мăнукусен ырлăхне курса савăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсен çемйисем, çывăх тăванĕсем, ял-йыш.**

**ÇЫРĂНТАРУ**

**Хаклă вулакансем!**

**Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2010 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтарас тапхăр вĕçленсе пырать. Çавăнпа та почтальонсемпе паян-ыранах тĕл пулма тăрăшăр.**

**Хаçата унччченхи хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.**

**Çитес çулта та пĕрле пулар!**